**Георгий ЕФИМОВ**

# ĂНА ТӐПЕ ЙЫХĂРНĂ...



*Э. ЮРЬЕВ художник*

**Ун чухне Михал Иванович Юрьев Шупашкар хулин Пасар урамĕнче пурăнатчĕ. Кил-йышĕ пысăкчĕ унăн: вăл вăхăтра пĕр ачи те пурнăç çулĕ çине тухманччĕха. Çав пысăк йыша ашшĕн — Михаил Ивановичăн — тытса пымаллаччĕ. Унăн арăмĕ ĕçлеместчĕ, çав йышлă ача-пăчана хăйсен куç тĕлĕшшĕн мĕнле пăрахса хăварăн!**

**Ултă пĕçмехлĕ йывăç çуртчĕ вĕсен. М. И. Юрьев вăл вăхăтра Чăвашрадиора тĕп редакторта ĕçлетчĕ.**

**Эпĕ, студент, çуллахи каникулта килнĕскер, радио çуртне кĕретĕп. Çурчĕ ун чухне Кайбулка шывĕ хĕринчех ларатчĕ, çулла, чӳречене уçсан, шыв шăнкăртатса юхни те илтĕнетчĕ. Халĕ ку вырăнсем шыв айне пулнă.**

**Михаил Ивановичпа курнăçрăм. Кĕç-вĕç ĕç кунĕ вĕçленмеллеччĕ. Вăл мана:**

**— Паян ĕç укçи пачĕç. Атя ман патăма, — тесе йыхăрчĕ.**

**— Килĕшӳллĕ пулать-ши! Эпĕ сирĕн мăшăрăра пĕлсех каймастăп, — тесе хуравларăм.**

**— Вăл ман çынсене тиркесех каймасть. Манпа пĕрле пыракансене нихăшне те хăррăн пăхмасть, — хирĕç хуравларĕ Михаил Иванович.**

**Çула май магазина кĕрсе тухрăмăр. Эпĕ батон туянтăм.**

**— Çын патне пуçласа пынă чухне çăкăрпа пымалла, — каласа хутăм эпĕ.**

**— Хă... Чăваш йăлине пĕлетĕнçке эсĕ, — сăнĕ çуталчĕ Михаил Юрьевăн.**

**Çитрĕмĕр. Картишĕнче ĕне тăрать.**

**— Ачасене сĕт кирлĕ, — кĕскен каларĕ кил хуçи.**

**Пӳрте кĕтĕмĕр.**

**Михаил Ивановичăн мăшăрĕ пире кăмăллăн кĕтсе илчĕ.**

**— Çĕнĕ юлташу пулĕ-ха ку! — мана тĕпчевлĕн пăхса ыйтрĕ хăй мăшăрĕнчен арăмĕ.**

**— Мускавра вĕренет. Сăвăç. Паллашăр.**

**Мăшăрĕ мана алă пачĕ. Манăн чунăм лăпланчĕ. Хирĕçлемеççĕ. Унтан мăшăрĕ:**

**— Михаил Иванович, Элли шăлаварне çурса пăрахрĕ. Çурт тăр-**

рине хăпарса кайнă та... — кил хуçине пĕлтерчĕ арăмĕ.

— Элли, кил-ха! — Кĕçех çӳллех мар ача тухса тăчĕ. Пĕр вичçĕмĕш класра вĕренет-ши? — Мĕн тума хăпарса кайнă эсĕ пӳрт тăррине?

Ача пĕр ура çинчен тепри çине пускаласа тăчĕ те:

— Папа, эпĕ çурт пуçне пропеллер лартрăм. Тухса пăхма та пулать. Çилпе хытă çаврăнать, чăн-чăн пропеллер! Шăлавара анне çĕлерĕ ĕнтĕ, — питĕ лăпкăн каласа хучĕ Элли. (Хула ачисем «папа», «мама» теме хăнăхнă иккен.)

— Ĕне валли курăк илсе килнĕи-ха? — ытахальтен тенĕ пекле ыйтрĕ ашшĕ.

— Килнĕ, — кĕске пулчĕ Элли хуравĕ.

Михаил Ивановичăн ача йышлă тенине илтнĕччĕ-ха эпĕ. Çавах та вĕсем пӳртре пачах та курăнмасççĕ. Ача-пăча киле çын килсессĕн яланах сĕтел тавралла явăнса çӳрет. Кусем çук, ав. Апла ашшĕамăшĕ ачасене йĕркене çирĕп вĕрентет.

Михаил Иванович сĕтел çине пулăштух кăларса лартрĕ. Арăмĕ çиме пуçтарчĕ. Эпĕ те чĕрĕк илнĕччĕ, кĕсьерен кăлартăм, хуçана патăм.

Хуллен-хуллен шăкăл-шăкăл калаçу тапранчĕ.

Михаил Иванович Юрьев сăвăсем те, пьесăсем те çырнă, пичетлесе кăларнă, вырăсларан чăвашла чылай куçарнă. Ĕçчен çын пулнă Юрьев. Сăввисене вăл Нямань хушма хушаматпа пичетленĕ.

Кăштах хĕртĕмĕр те, Михаил Иванович:

— Элли, кил-ха кунта, — тесе чĕнчĕ. Элли ун умне пырса тăчĕ. Унтан ачана: — Атя, сăвă каласа пар-ха хăнана, — тесе хушрĕ.

Элли кĕттермерĕ, яшт! тӳрленсе тăчĕ те:

Эпир вăйлăн вăя пухнă,
Тĕнчере — пĕрре.
Çĕнтермешкĕн эпĕр тухнă,
Çĕнтеретпĕрех... — янраттарма пуçларĕ сăвва. Каласа пĕтерсен, амăшĕ Эллирен:

— Сăвви камăнччĕ-ха? — тесе ыйтрĕ куларах.

Элли ăна тӳрех:

— Няманĕн, — тесе хуравларĕ.

Ак сана! Ача веçех пĕлет.

— Маттур, маттур! — лăпкарĕ ачана çурăмран ашшĕ.

Малтанхи тĕл пулу çапла иртсе кайрĕ манăн. Ача хăюлăхĕ, тавçăрулăхĕ килĕшрĕ. Вăл çухалса каймасть, турткалашса тăмасть. Хăй пĕлнине ашшĕ-амăшĕ умĕнче те, çын умĕнче те кăтартма пултарать.

Кайран эпĕ Элли Михайлович Юрьевпа чач-час курнăçман. Вăл инçе çĕрте, Грузи тĕп хулинче Тбилисире, ӳнер академийĕнче вĕреннĕ, хăйĕн ăсталăхне ӳстернĕ.

Элли Михайловичпа, вăл вĕренсе таврăнсан, эпĕ унпа пĕрле, нумаях пулмасан та, ĕçленĕ. Питĕ тăрăшуллă ĕçлетчĕ. Кĕнеке издательствинче вăй хунă чухне ĕнтĕ Элли хăйне майлă шрифт шутласа кăларчĕ. Шрифчĕ вара Элли Михайловича çеç тивĕçлĕ. Кĕнеке издательствинче пичетленсе тухакан кĕнекесене те илемлететчĕ. Каласа хăварам: вăл манăн «Çитмĕл çичĕ пĕртăван» ятлă юмахсен кĕнекине илемлетрĕ. Нумай тĕслĕ сюжетлă ӳкерчĕксем кăна кĕнекере вун улттă. Унсăр пуçне кĕнекен кашни страницинче ӳкерчĕксем. Епле тăрăшнă вăл, мĕнле

вăй хунă. Кĕнекере 144 страница вĕт. Унтан «Асран кайми» ятлă сăвăсемпе поэмăсен кĕнекен хуплашкине туса парĕ. Паха хуплашка пулса тухнă: алла тытма кăмăллă. Ыттти писательсемпе сăвăçсен кĕнекисене мĕн чухлĕ илем кĕртнĕ-ши пултаруллă художник?! Асăнса та пĕтерейместĕн...

Чаплă ӳнерçĕ хăй ăсталăхне çамрăксене те пама шеллемен, вĕрентнĕ ăс панă вăл. Хăй Чăваш кĕнеке издательствинчен Хула Канашне ĕçлеме куçнă чух Галина Самсоновăна хăй вырăнне ĕçлеме сĕнет. Халĕ Г. Самсонова кĕнеке кăларас ĕçре паллă ăстасенчен пĕри шутланать. Çаплаччĕ Э. М. Юрьев.

Хула Канашĕнче ĕçленĕ чух тĕп художник пулнă. Шупашкар сăнне илем кĕртесшĕн вăйне-халне шеллемен вăл. Хула кĕперĕсене пурне те хăйне евĕрлĕ тимĕр эрешпе сăн кĕртнĕ. Эрешĕсем чăваш тĕррине аса илтереççĕ.

Унтан пултаруллă художник Шупашкар хулин Гербне турĕ. Епле илемлĕ вăл, чун патне пырать. Пилĕк кайăк кăвакалĕ Шупашкар таврашĕнчи çут çанталăк пуянлăхне сăнлать ĕнтĕ. Йăлтах пуç тавралла шутласа тунă ӳнерçĕ. Вăл хула историне тĕплĕн тĕпченĕ. Ӳнсăр ăнăçлă ĕç пулать-и вара!

Пурне те хăй куçĕпе курма, пуне те хăй чунĕпе туйма тăрăшнă Элли Михайлович. Кам ăна парашютпа сикме хистенĕ! Никам та. Хăй пуç тĕлĕшшĕн вăл Шупашкар аэроклубне çӳреме тытăнать. Тытăнать те, йӳле ярса мар, чăнласа вĕренет, вара парашютпа сикме пуçлать. Ак сана! Вăл çӳл тӳперен 200 хута яхăн сикет! Хăй каласа панă тăрăх, парашютиста çил Сĕнтĕрвăрри еннелле те вĕçтерсе кайни пулнă. Хăраса ӳкмен сенкер тӳпене савакан çын. Унтан художник планерпа та вĕçсе пăхнă. Пĕр сăмахпа каласан: пурне те хăй тĕрĕсленĕ Элли Михайлович!

Акă мĕншĕн çамрăк ача Элли пӳрчĕ умне пропеллер хăпарса лартнă! Ăна ĕмĕт чĕннĕ.

Эллие курах пулĕ ĕнтĕ унăн шăллĕ Хаджи Михайлович та художнике тухнă. Вăл та Чăваш кĕнеке издательствинче нумайччен ĕçлерĕ. Шел, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

1995 çулхи çурла уйăхĕнче эпир пĕрле, пĕр пӳлĕмре, больницăра выртрăмăр. Хăй ĕç планĕсемпе паллаштарчĕ вăл. Çавăн чухне мана К. В. Иванов сăнĕпе кăларнă пĕр тенкĕлĕх укçа парнелерĕ. Çав укçана сăвăç çуралнăранпа 100 çул тултарнине асăнса Ленинградри Монетный дворта кăларнă. Элли Михайлович хăй аллипе ăсталанă ăна. Сăвăç сăнлă укçана, Элли парнине, эпĕ ĕмĕрех чыслăн упрăп.

Вăл вăхăтра çав больницăра Орест Филиппов та сипленетчĕ. Ун чухне художник пирĕн сăнсене ӳкерчĕ. Элли унăн ӳкерчĕкĕсене фотопленка çине кăларма пулчĕ, мана пама сăмах пачĕ. Кăларнă та иккен, анчах Элли мана парса ĕлкĕреймерĕ. Тен, сăн ӳкерчĕксем хушшинче упранать те пулĕ!

1997 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарти ӳнер музейĕнче Чăваш халăх художникĕн, Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕн, К. И. Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕн лауреачĕн Элли Михайлович Юрьевăн ĕçĕсен куравĕ уçăлчĕ.

Вăл кун Элли Михайловича халалласа эпĕ те сăвă вуласа патăм.

**Акă вăл:**

*Элли Юрьева —*
*чăваш халăх художникне*

*Эп пĕлнĕ санăн аçуна та,*
*Пĕрле ĕçленĕ кăмăлтан.*
*Телейпеле кун-çул сунатăп*
*Эп унăн ывăлне паян.*

*Çут тĕнчере ăста сахал,*
*Сăрлавçăсем вара — çитеççĕ.*
*Элли, ĕçӳ пырать кал-кал,*
*Эс çĕр-шывра хастар ӳнерçĕ.*

*Эс тӳпере те пулнă теççĕ,*
*Анса парашютпа унтан.*
*Ӳкерчĕксем сана çĕклеççĕ*
*Яланлăхах тӳпе таран.*

*Чăваш Ялавĕпеле Гербĕ*
*Сан чуну витĕр шăранса*
*Тухни çинчен пĕлетĕп эпĕ...*
*Элли, чăн паттăрлăх ку сан!*

*Чăваш чунне ăнланмасассăн,*
*Тĕпчемесен аваллăха*
*Эс парас çукчĕ пулĕ сасă?*
*Эс ăнланатăн халăха.*

*Ӳкерчĕкӳ те,сас палли те*
*Пуласлăха куç хывнине*
*Курса тăратăп эпĕ витĕр,*
*Куратăп сан ĕçченлĕхне.*

*Элли, эс пĕтĕмпех ху евĕр,*
*Чăн-чăн ăсталăх — вăл санра.*
*Кун-çул утти, кун-çул кĕрлевĕ*
*Кашни ӳкерчĕкрех янрать*
*Куç умĕнче те халăхра, —*
*Сăрă симфоние куçать,*
*Телейĕн хапхине уçать...*

**Сăвва эпĕ Элли Михайловича патăм. Ӳнерçĕ ăсталăхĕнчен чăннипех те тĕлĕнетĕп. Питĕ нумай енлĕ унăн пултарулăхĕ.**

**Куравра эпĕ А. С. Пушкинăн «Пĕчĕк трагедисем» кĕнеке валли хатĕрленĕ ӳкерчĕксене асăрхарăм. Вĕсен умĕнче чылайччен пăхса тăтăм. Ку трагедисене П. Хусанкай, Ю. Айдаш тата эпĕ чăвашла куçарнă. Çак кĕнеке Раççей Федерацийĕн кĕнеке выставкинче диплом илнĕ. Паллах, Элли Михайлович ӳкерчĕкĕсем чылай пулăшнă ĕнтĕ.**

**Художник хатĕрленĕ куравра ӳкерчĕксем питĕ нумайччĕ. Унта эпĕ çакна асăрхарăм: сенкер сăрăпа ӳкернисем чылайччĕ. Апла ӳнерçĕ чăннипех те вĕççĕрхĕрсĕр таса тӳпене юратнă, тӳпенелле чунĕпе ăнтăлнă. Таланчĕ нумай енлĕччĕ Элли Михайловичăн.**

**Кам шутланă художник пирĕнтен çапла ир уйрăлса каять тесе. Утмăл пилĕк çула та çитеймерĕ, виçĕ уйăх кăна юлнăччĕ вĕт-ха.**

**Утмăл пилĕк çул тĕлне ӳнер музейĕнче художник ĕçĕсем куравĕ уçăлчĕ. Анчах хăйсĕр. Шел. Кирек мĕнле пулсан та — ăстасем вилмеççĕ, талантлă çынсем яланах халăх асĕнче пурăнаççĕ. Унăн ĕçĕ-хĕлĕ вилĕмсĕр, Авă, Республика площадĕнче Ялав вĕлкĕшет, тӳпенелле пăхса вĕлкĕшет. Апла Элли Михайлович пирĕнпе пĕрлех!**

**Элли Михайлович Юрьев çинчен тĕпчев ĕçĕсем те пичетлеме тытăнĕç-ха. Унта пĕтĕмпех тĕплĕн та таръннăн каласа парĕç художник пултарулăхĕпе кун-çулĕ пирки. Пурсăмăр та шанатпăр. Элли Михайлович ăна тивĕçлĕ!**